Медицина ĕçченĕсен кунне халалласа

# Ĕçлес тесех ĕçлерĕ, ывăннине пĕлмерĕ



Сывлăхран хакли çук. Ăна укçа парса илеймĕн. Çак чăнлăха больница кравачĕ çине выртсан çеç усăмлă ăнланса илетĕн. Унччен ăста пулнă-ха санăн шухă шухăшу, тĕнчен мĕнле илемĕпе киленнĕ те витĕннĕ, хăш телей кайăкне хыçалалла пăхмасăр хăваланă? Сывлăх хавшанипе больницăна лексен çеç çак яланхи ыйтусем çине хурав шырама пуçлатăн. Хăрах салтак çар çынни мар тенĕ пек, пĕччен сывă мар çыннăн та çак ыйтусем çине хурав шырама хевте çитсех каймасть. Телее, юнашар çӳрекен сывлăх хуралçисен мал ĕмĕтлĕ шухăшĕсенĕвĕсем çак çитменлĕхе туххăмрах сиреççĕ. Çутă шухăшсем тата ырă сунакансем çумра ытларах пулсан илемлĕрех иккен тĕнче! Палатăран ирхи процедурăна вăр-вар пурнăçласа тухса кайнă медицина сестри пирки тав туса пуçăмра çапла шухăшсем тĕвĕленчĕç... Палатăра пулнă кĕске вăхăтра Анфиса Петровна кашнинпех ăшă сăмах хушса илме, чирлисене ăшă кулă парнелеме ĕлкĕрчĕ вĕт. Çак çыхăну та эмел, чун эмелĕ. Эпĕ шухăша кайрăм: пирĕн пурнăçăмăрта çынсен хутшăнăвĕн таса çăлкуçĕ вараланман-и-ха, вăл ăшăхланса юлман-и-ха, илемлĕхне çухатман-и-ха? Ыйтусем нумай, анчах ыранхи кунăн ырлăхне шанни усал шухăшсенчен пăрчĕ. Ырă туйăмлă чĕрере усал тавраш валли вырăнĕ те çукрах çав.

...Ман умран пурнăçра хурашурне пайтах курнă-тӳснĕ, анчах чунри тасалăхпа тирпейлĕхе çӳллĕ шайра сыхласа хăварнă Анфиса Петровна Ильгечкина сăнарĕ чылайччен каймарĕ. Епле-ха капла? 70 çула çывхаракан медицина сестринне 15 çулне пĕр шиксĕрех кăларса пăрахмалла пек курăнать. Кун пек чух тин тĕрĕслĕх çывăха пулмалла пек, анчах... Çак вăхăтра медсестра чирлисене йăваш та уçă сасăпа юн пусăмĕ виçме тухма чĕнчĕ. Майĕпен коридор чирлисен хĕвĕшĕвĕпе тулчĕ...

...Кăçал çулталăк вĕçĕнче 70 çул тултаракан Анфиса Петровна Ильгечкина ĕçрен пушаннă вăхăтра самантлăх шухăша кайрĕ. Çак хушăра унăн пĕтĕм ĕç ĕмĕрĕ куç умĕпе вĕçсе иртрĕ. Йăлтах ĕнер пулнă пек, анчах хыçра – 70 çул. Вĕсенчен 52-шне медсестра Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ райбольницăн хирурги уйрăмĕнче иртернĕ, хăйсен ĕçĕнчи ăста хирургсен тăрăшулăхне, ĕç юратăвне, пурнăçа юратакан ырă та мал туртăмлă çынсен канашĕсене чĕрере упраса хăварнă.

1939 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрти Токшикре виçĕ ывăлне чир-чĕре пула ачаллах çухатнă хресченсен çемйинче çуралнă Анфиса – вăрçă ачи. Вăл çулталăк çурăра чухне ашшĕ – Петр Антонович Антонов – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине тухса кайса 1942 çулта хыпарсăр çухалнă.

– Анне пĕчченех пăхса çитĕнтерчĕ мана. Ялта ыттисенчен кая выçă лартмарĕ, çĕтĕк-çатăк çӳретмерĕ. Вăл вăхăтпа килĕшӳллĕ вăтам пĕлӳ илме пулăшрĕ, пурнăç çулĕ çине кăларчĕ, – аса илет паян Анфиса Петровна амăшĕ çынпа яланах ырă пулма вĕрентнине чĕлхе çинчен ямасăр.

1956 çулта шкул пĕтернĕ хĕр вăл вăхăтпа инçетри аслă шкулсене вĕренме кайма хевте çитереймен. Çавăнпа та Мăн Сĕнтĕр больницинче çак çул «Хĕрлĕ хĕрес» общество йĕркеленĕ 8 уйăхлăх медицина сестрисен курсĕ уçăлсан, Анфиса пĕр шутламасăрах унта çул тытать. Мĕн илĕртнĕ унта ăна – паян та çулсенчи хĕрарăм тĕрĕс хурав параймасть. Тен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен аманса таврăннă тата вăрçă суранĕсемпе аптăракан фронтовиксен кунçулĕ, тен ашшĕне фронтра çухатни, тен çав çулсенче ялсенче пурăнакансене чир-чĕр канăç паманни? Апла-и, капла-и, анчах çав курссенче Мăн Сĕнтĕр больницин вăл вăхăтри тĕп врачĕ тата хирургĕ Семен Виссарионович Матвеев, инфекционист тата окулист Григорий Сергеевич Чернов, Леонила Филипповна Котова педиатр, Макарий Васильевич Григорьев терапевт вĕрентни тата халăх сывлăхĕшĕн кĕрешме тивĕçлĕ пĕлӳ пани, курссен ертӳçи Константин Петрович Чернов вĕренĕве пĕлсе йĕркелесе пыни Анфиса Петровна ăшĕнче ырă вăрлăх пек юлнă. Ырри вара ырă çимĕçех парать.

18 çул тултарас умĕн декабрĕн 1-мĕшĕнче тăрăшуллă хĕр Мăн Сĕнтĕр больницине регистратурăра ĕçлеме вырнаçать. Вĕреннĕ чухнех хирурги уйрăмĕнче ĕçлеме ĕмĕтленнĕ çамрăк медсестрана пĕр-икĕ уйăхран тĕп врач тата больницăри пĕртен-пĕр хирург С. Матвеев хăйĕн патне ĕçлеме илет.

– Ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ тесе каламалла пек, анчах йывăрлăхĕ те măй таранччĕ. Электричество çути пулманран Семен Виссарионович операцисене краççын лампа çутса тăватчĕ. Эпĕ ĕçе кĕрсен 2-3 çултан тин больницăна электричество çути çитрĕ. Ĕнерхи фронтовик-хирургăн операци тăвас ĕçĕ çăмăлланчĕ.

1964 çулта Муркаш районĕ çĕнĕрен йĕркеленсен тата райцентр Муркаша куçсан, унччен райĕçтăвком вырнаçнă çуртра больница уçăлать. 1979 çулта çĕнĕ больница хута кайиччен чирлисене кунта йышăнаççĕ. Паян вара ĕнерхи больница вырăнĕнче поликлиника. Историллĕ çак кунсем-çулсем тата ку вăхăтри Мăн Сĕнтĕр больницин ĕçĕ-хĕлĕ пĕтĕмпех хирурги уйрăмĕнче медсестрара вăй хуракан Анфиса Петровна куçĕ умĕнче иртеççĕ.

Медсестрасен 8 уйăхлăх курсĕнче вĕренсе пурнăç çулĕ çине тухнă хĕр илнĕ пĕлӳ çителĕксĕррине пĕрремĕш кунранах сисет. Çавăнпа та 1964 çулта Саранскра 8 уйăхлăх курссенче вĕреннисене куçăмсăр майпа медсестрана вĕрентме пуçласан, çак çул çемье çавăрнă Анфиса Петровна пĕр шухăшласа тăмасăрах унта вĕренме кĕме документсем парать. «Çавăнта 3 çул вĕренсе алла медсестра дипломне илсен тин хам тулли правallă сывлăх хуралçи пулса тăнине ĕнентĕм», – кăмăллăн калаçать аса илӳсен çăмхине сӳтнĕ май ĕç ветеранĕ. Малтан радиоузел монтерĕнче, кайран радиоузел пуçлăхĕнче ĕçленĕ мăшăрĕ Николай Федорович та арăмĕн çулне пӳлмен. Пĕрпĕрне ăнланса тата юратса пĕрлешнĕ мăшăр хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ. Вĕсем – Надеждăпа Алексей – çемье династине малалла тăсакансем. Надежда Николаевна Бочкарева Шупашкарти медицина училищине вĕренсе пĕтернĕренпех Мăн Сĕнтĕр больницин ĕçченĕ: акушерка, медсестра, больницăн тĕп медсестри. Кинĕ – Елена Петровна – Шупашкарти медицина училищине пĕтернĕренпех больница лаборанткинче ĕçлет. Вĕсен тăвата ывăлĕ – Анфиса Петровнан паянхи телей пĕрчисем.

Çемье çине çитрĕмĕр пулин те, пурнăçне Мăн Сĕнтĕр больниципе тачă çыхăнтарнă хĕрарăмăн шухăш-ĕмĕчĕ сыватăшран тухмасть.

– Йывăр чирлисемпе çĕр çывăрмасăр ирттернĕ кунсем, çав йывăрлăха çĕннисем паян тав сăмахĕсем калани, халĕ хирурги уйрăмне ертсе пыракан ăста хирург Николай Ефимович Григорьев, врач-травматолог Минин Алексеевич Васильев, хирурги уйрăмĕнчи медсестрасемпе санитаркăсем хăйсен ĕçĕнче мĕнле патăрлăх кăтартни мана паян та тĕлĕнтерет. Ĕнер йывăр пулнă çын паян район аталанăвĕшĕн вăй хуни пире пурсăмăра та савăнтарать, ĕçлес вăй-хала ӳстерет, – чей ĕçнĕ май шăкăлшăкăл пуплет 52-мĕш çул медицина сестринче вăй хуракан Анфиса Петровна Ильгечкина. – Манăн хам суйланă ĕçре ĕçлес килет. Çавăнпа смена кунĕ çитсен чирлисене вăхăтра пулăшу парас ĕмĕтпех ĕçе тухса утатăп. Урампа иртнĕ чух сывлăх сунакансен сăмахĕсене ăшă кăмăлпа йышăнатăп, хăйсене те 100 çулччен пурăнма пиллетĕп.

Çак вăхăтра Анфиса Петровнăна çывăхри палатăна чĕнсе илчĕç...

**Анатолий БЕЛОВ.**

Искусство тĕнчи...

Очерк

# Кĕвĕне халалланă пурнăç

**«Ĕмĕрĕме купăспа выляссине тата халăха халаллarăм», – тет те паян Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура работникĕ, музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ Меркурий Борисович Ягунов, самантрах тарăн шухăша путать...**

Халăх хушшинчи культура аталанăвĕн шайĕ нумай чух ыррине кăна шантарать. Культура-çке вăл ташă-юрă кăна мар. Унăн пĕлтерĕшĕ те, чикки те анлă: ял культури, урам культури, улăх-çаран культури, тырă-пулă туса илес культура, суту-илӳ культури, экономика культури, вăйă-кулă культури т.ыт. те – йăлтах халăхăмăр пурнăçĕн уйрăлми пайĕ. Культура тĕлĕшпе Меркурий Борисовичăн шухăш çăмхи вара пысăк, ял ачин пурнăçĕн кашни çаврăмĕ унта хăй йĕр пулса юлнă, ытларахăшĕ нотăсемпе илемленнĕ, кĕвĕне йĕркеленнĕ, çынсемпе кăмăллă хутшăнас ĕçе çаврăннă, халăхăмăра ырă сунассинче вăй илнĕ. Культура ĕçне халалланă 40 çул ытла вăхăт вăл тăвата кун мар: хури-шурри те, ытли-çитли те, выççи-тутти те пайтах пулнă. Анчах вĕсем хăйĕн ĕмĕрне кĕвĕ пурнăçне халалланă арçыннăн кăмăлне ура хураймаn: «чараканăн» хевти çитеймен пулас... Ашшĕ-амăш çунатти айĕнче ирттернĕ ним шухăшсăр ачалăхра тарăн ăс, çирĕп вăй-хал пухнă Меркурий Борисович вара çамрăклах хăй суйласа илнĕ кĕвĕ лаççинче вăхăта уямасăр ĕçлеме пуçланă, ăсталăхĕпе тăрăшулăхне пĕр çыхă туса кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шăрçаланă, хăйĕн тавра пухнă пĕр шухăшлă çамрăксемпе концерт хыççăн концерт лартнă, каççерен ял çыннисем умне тухса çĕр ĕçченĕн пурнăçне илем кӳнĕ, çĕнĕлле ĕçлеме хавхалантарнă, тăван таврана ырă ят сарнă.

Искусство тĕнчи... Епле капмар та илемлĕ вăл! Унăн хевтинче никам ытамне вырнаçайми пысăк пуянлăх, вăл хăйĕн пархатарĕпе тавралăха савăнăç илсе килет, чун илемне уçса ăна малалла ӳсме çул парать, илемлине туйма тата юратма вĕрентет. Искусствăн хăй патне илекен туртăм вăйĕ питĕ пысăк. Унта пурте пур: туйăмсем, шухăшсем, чун характерĕ, илемлĕхпе аталану куçăмĕ. Искусствăн асамлă вăйĕ çынна пĕр евĕрлĕ пурнăçран хăтарать, творчествăри пултарулăха ӳстерет, чун пурнăçне урăхлатать. Çак илемлĕ тĕнчене – искусствăна – хăйĕн чунне паракана чăннипех телейлĕ теме пулать.

М. Б. Ягунов 1939 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче Кăпас ялĕнче çуралнă. Аратăра купăс калакансем пулнăран Меркурий те пĕчĕккĕллех алла хут купăс тытнă. Ашшĕн шăллĕн «Русский строй» хут купăсĕ пулас композиторăн пĕрремĕш шкулĕ пулнă. «1946 çулхине яла тиф чирĕпе кĕрешекен санитаркăсем пырсан, вĕсем те эпĕ каланă купăспа ура хуçса ташлатчĕç», – аса илет кĕвĕ пурнăçĕн пуçламăшне Меркурий Борисович. Çав вăхăтри хастарлăх ял ачине ытларах та ытларах кĕвĕпе çыхăнтарать. Ӳсерехпе ĕç пурнăçĕ те кĕвĕрен тата купăсран уйрăлса каяймасть. 1957 çулта Меркурий купăççă Кăпас ял клубĕнче баянист пулса ĕçлеме пуçлать, художество пултарулăх ушкăнĕ йĕркелет. Çавăнпа пĕрлех 1958 çулта республикăри Халăх пултарулăх çурчĕ çумĕнчи баянистсен курсне пĕтерет. 1963 çулта вăл ертсе пыракан коллектив районта иртнĕ республикăн 9-мĕш юрăпа ташă уявĕнче призлă вырăна тухать, Тав çырăвне тивĕçет. Çав вăхăтсенчех нумай сасăллă хор йĕркеленине, шкулта аслă классенче вĕренекенсенчен ташă коллективĕ пуçтарнине Меркурий Борисович творчествăлла çул пуçламăшĕн ырă утăмĕ тесе хаклать. Мĕн акатăн – çавă шăтать. Чуна парса ĕçленĕ май малтанхи ăнăçу çумне çĕннисем хушăнаççĕ.

Пултаруллă хут купăсçăна 1966 çулта Муркашра анчах йĕркеленнĕ музыка шкулне ертсе пыма шанаççĕ. Муркашри вăтам шкулта ĕçленĕ класcем М. Ягунов тăрăшнипех 3-4 çултан хăйсене валли уйăрнă ятарлă çурта куçаççĕ. Çак вăхăтрах 1966 çултанпа 16 çул хушши хут купăççă районти шалти ĕçсен пайĕн художество пултарулăх ушкăнне ертсе пырать, районти культура ĕçченĕсен хорне кунçул парать.

1971 çултанпа Меркурий Борисович Кăпасри 8 çул вĕренмелли шкулта ачасемпе кĕвĕ,



изоискусство, физкультура, ĕç урокĕсем ирттерет. Ачасене юрă-кĕвĕпе анчах мар, сывă пурнăç йĕркипе те туслă пулма вĕрентет. Çав çулсенчех Кăпас шкулĕнче футбол, хоккей командисем йĕркеленеççĕ, вĕсем те район ятне сыхлассипе сахал мар вăй хураççĕ.

Ĕç урокĕсенче учитель йывăç касма, йывăç çине йĕнтсе ӳкерме вĕрентни, алăксем тума хăнăхтарни, тасалăха сывăхлатни хăйсене пурнăç илемне туллинрех курма вĕрентнине паян пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă арçынсемпе хĕрарăмсем тав туса çеç аса илеççĕ.

– Пирĕн хут купăççă пур енлĕ аталаннă çын. Унăн аллисем ылтăн. Çавăнпах-тăр вăл яланах шыравра. Хут купăспа çеç мар, пуртă-мăлатукпа та, атă-пушмак юсама та, çĕвĕ ĕçĕнче те вăл чăн-чăн маçтăр. Пĕр пулăшу ыйтакана та айккинче хăвармасть. Çавăнпа хисеплеççĕ те ăна ял çыннисем, – теççĕ Меркурий Борисович пирки пĕрле ӳссе çитĕннĕ юлташĕсем, ял çыннисем.

Ылтăн алăллă хут купăççă çемьере те тĕслĕх вырăнĕнче. Вĕсем мăшăрĕпе 3 ача пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Çапах М. Ягунов хăйне кĕвĕ-çемĕрен катара тытаймасть. Çулсем иртнине пăхмасăрах вăл паян та Юнкăри Культура çурчĕ çумĕнчи юрăпа ташă ансамбльне, республикăра пĕрре мар ырăпа палăрнă ветерансен хорне ертсе пырать.

– Пĕр вырăнта ларма пултараймастăп. Утнă чух та, ларнă чух та пуçран кĕвĕ каймасть. Кĕвĕпех чĕрĕк ĕмĕр ярмăрккăсене карусельпе тухатăп. Çуралнă кĕвĕсене юрăна хыватăп, – савăнăçне пытармасăр калаçать Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ М. Ягунов.

Тăван енре çакнашкал ăстасем пур чухне вĕсен ĕçĕпе киленсе ытларах та ытларах ĕçлес килет. Çапла пултăрччĕ те.

**А. ПЕТРОВ.**

Килти хушма хуçалăх

## Пысăк тухăç вăрттăнлăхĕ

Çĕр улми тутлăхлă çеç мар, çителĕклĕ сывлăш кĕрекен кăпăшка çĕре юратать. Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх çĕр улмишĕн çĕр сывлама пултарни нӳрĕк пуррипе танах. Çавăнпа та «иккĕмĕш çăкăр» çеçкисем 10-12 сантиметра çитсен вĕсене объязательнăй йĕркепе купалантармалла. Çак ансат тата пурте пурнăçлама пултаракан ĕç çĕр улми тухăçне 25 – 30 процент таран ӳстерет. Манас çук, вăрăма кайнă шăрăх та типĕ çанталăкра çĕр улми кассисене тарăн кăпкалатни, ретсене купалантарни вырăнлă ĕç мар, мĕншĕн тесен ахаль те сахал нӳрĕк туххăмрах пăсланса пĕтет. Кун пек чух ретсем хушшинчи ăшăх кăпкалатусем (5-6 сантиметр) вырăнлă. Çав вăхăтрах çумăр çуса иртсен е шăварса пĕтерсен объязательнăй йĕркепе касăсем хушшине кăпкалатса тăпрана ретсем çумне купалантармалла. Çакă хушма çимĕçсем тытăнма пулăшать. Çĕр улмие алăпа шăварнă чух пĕр лейка шыв çĕр улмин 2-3 тĕммине çитет. Ретсем хушшине чĕрессине 20 кун иртсен тепре пурнăçламалла.

## Хăярсене шăварасси

Хăярсене лартсан малтанхи вăхăтра вĕсене кăртăнкăрах шăвармалла. Ахальлĕн ытлашши нӳрĕк, çитменнине шывĕ сивĕрех пулсан, хăяра пысăк сиен кӳрет: калчасем ӳссе аталанмасăрах пĕтеççĕ.

Вунă кунра пĕрре хăяра тислĕкпе хутăштарнă шывпа шăвармалла.

## Фасоль

Ку культурăна хăярпа пĕр вăхăтрах акаççĕ. Хура тăпраллă мар зонăри час улшăнакан çуллахи çанталăк условийĕсенче тĕмĕллĕ фасоле ытларах ӳстереççĕ.

Çакна валли пахчаçăсем хĕвел ытларах ӳкекен, çилсенчен хӳтĕленнĕ, тухăçлă çĕр лаптăкĕсене суйласа илеççĕ. Фасоль акас умĕн ăна валли уйăрнă йăрана çĕрнĕ тислĕк хурса пусаççĕ. Тĕмĕллĕ фасоле йăран çинче виçĕ ретпе е шахмат йĕркипе ӳстереççĕ. Акнă чух йăран çинчи кашни шăтăка маларах ислетнĕ икĕ вăрăна 2-5 сантиметр тарăнăшне хумалла. Тĕмĕсем хушши 20-30 сантиметр, ретсем хушши 30-45 сантиметр кирлĕ. Вăрлăха лайăх тымарланма авăнчăк енĕпе аялалла туса хумалла. Фасоле пăхса тăрасси йăрансене тăтăш çумланинче, шăрăх çанталăкра шăварсах тăнинче тата ретсем хушшине кăпкалатсах тăнинче.

Фасоль тухăçне вăл чечеке ларсан 2-3 эрнерен пуçтарма пуçлама юрать. Çимĕççене ирпе е каçпа ватăлса е хытса каясран суйласа касса пуçтармалла.

**А. СЕМЕНОВ, «Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.**